26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
16
ЭРНЕКУН
144(6381) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Агитаторсен уборка вăхăтĕнчи задачисем

Ялхуçалăхĕнчи татăклă вăхăт çывхарса килет. Колхоз хресченĕсем отечественнăй вăрçă условисенче виççĕмĕш хут тырпул пухса илеççĕ. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, хăйсен задачине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Анчах халĕ колхозсенче ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ сахалланса юлчĕ. Çавăнпа та партипе совет организацисен хальхи задачи—тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилесси, йывăрлăхсене çĕнтерсе пырасси пулать. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн ирттерни — фронтра пысăк çĕнтерӳ тунипе пĕрех. Çакна партипе совет кашни работникĕн, кашни пропагандистпа агитаторăн асра тытас пулать.

Çуракине ăнăçлăн ирттернĕ çĕрте пирĕн большевикла агитаци пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăчĕ. Çулăмлă сăмахсемпе тата хăйсен примерĕпе агитаторсем колхозниксене хирте вăя шеллемесĕр ĕçлеме, çуракине хăвăрт туса ирттерме хавхалантарса пычĕç. Çураки вăхăтĕнче пухнă опыта çирĕплетсе тата ӳстерсе пырасси—пирĕн агитаторсемпе пропагандистсен уборка вăхăтĕнчи тивĕçĕ пулмалла.

Хальхи вăхăтра ялти агитаторсен тырпулсене пухса кĕме комбайнсем, тырă вырмалли машинăсем тата алăпа ĕçлемелли инвентарьсем хатĕрлесе çитерес, вĕсемпе тырă вырнă чухне тулли усă курас, горючие перекетлесси-пĕн кĕрешес, тырă пухса кĕнĕ çĕре колхозниксемпе ытти ял çыннисене пурне те явăçтарас, уборкăра ĕçе тĕрĕс организацилес, çынсене тĕрĕс вырнаçтарса тухас, тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕрес-сишĕн социализмлă ăмăртăва организацилес, государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен пурнăçа кĕртес ыйтусем çине ытларах çаврăнса пăхмалла. Агитаторсен ялти ĕççыннисене çакăн çинчен анлăн ăнлантарса памалла: кăçалхи вăйлă тырпула хăвăрт та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тесен, хамăрăн пĕтĕм вăя кӳлсе ĕçлемелле, ялти ĕçлеме пултаракан çынсен пурин те хирти ĕçсене хутшăнмалла, ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт туса ирттерсе, нимĕç фашисчĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшмалла.

Çак енчен илсен, Шăхасан районĕнчи Тельман ячĕпе тăракан колхозри коммунистсемпе агитаторсен ĕçри опычĕ лайăх. Колхоз уборкăна пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ: ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса хатĕрленĕ, тырпул тăккаланнине хирĕç мĕнле кĕрешмеллине палăртнă, михĕсемпе шăналăксене юсаса хатĕрленĕ, итемсемпе складсене йĕркелесе çитернĕ. колхозниксем ăçта ĕçлемеллине палăртса хунă. Колхозри агитколлектив уборка вăхăтĕнчи массăлла-политикăлла ĕçĕн планне туса хатĕрленĕ. Бригадăсенче хаçат вулакансемпе боевой листоксен редакторĕсене уйăрнă, куса çӳрекен библиотека [illegible]

[illegible]

ВКП(б) райкомĕсем ялан, кулленех [illegible] пырсан, агитаторсем ирттерекен ĕçсене пултарĕç. Акă, ВКП(б) Элĕк райкомĕ тырпулсене пухма вăхăтри массăлла-политикăлла ĕçне [illegible]

не туса хатĕрленĕ, ялти агитаторсен семинарĕсене ирттерме палăртнă. Халĕ икĕ семинар ирттернĕ те ĕнтĕ. Унта Совет Союзĕн отечественнăй вăрçин икĕ çулталăкĕ çинчен, тырпулсене пухса кĕме хатĕрленесси тата район умĕнче хуçалăх тĕлĕшпе тăракан ытти задачăсем çинчен, уборка вăхăтĕнчи агитмассăллă ĕçĕн планĕ çинчен сӳтсе-явнă. Семинарсене ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем ертсе пынă.

Элĕк райкомĕ тĕрĕс тăвать. ВКП(б) кашни райкомăн уборка вăхăтĕнчи массăллă-политикăллă ĕçĕн планне тĕплĕн туса хатĕрлемелле. Агитаторсене оперативно ертсе пырса вăхăтра пулăшма тăрăшмалла. Ялти агитаторăн халĕ массăсен организаторĕ тата вĕсене вĕрентекенĕ пулмалла. Çавăнпа унăн колхозри ĕçе организацилесе пыма пĕлмелле, хире тухма мĕн хатĕрри-пе мĕн хатĕр маррине тĕрĕслемелле, бригадăна хăйĕн хире илсе тухмалла, колхозниксене ĕçре пример кăтартса пымалла. Анчах хăшпĕр вырăнсенче çакăн пек ĕçлеме пĕлмен, лайăх ĕçлеме кирли çинчен шавлă сăмахсемпе сӳпĕлтетсе çӳрекен «агитаторсем» те тĕл пулаççĕ-ха. Ун пек çынсене агитаци ĕçне шанса пама кирлĕ мар.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре агитаци ĕçĕн тĕрлĕ формисемпе усă курмалла. Тăтăшах хаçатсем вуласа памалла, бригадăсемпе звеносенче калаçусем ирттермелле, Совет Информбюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштармалла, кашни çынпа уйрăммăн та ĕçлемелле, хĕрарăмсем е çамрăксем валли ятарласа калаçусем ирттермелле, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлармалла, кăтарту хăмисем организацилемелле, лайăх ĕçлекен колхозниксен опытне анлăн сармалла, кахалланса çӳрекенсене хытă критиклемелле, социализмлă ăмăртăва организацилесе пымалла.

Колхозсенчи клубсен, вулав çурчĕсен агитациллĕ ĕçĕн центрĕсем пулса тăмалла, уборка вăхăтĕнче вĕсен хăйсен ĕçне хире куçармалла. Уборка вăхăтĕнче районри хаçатсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Колхозсенче тырă пухса кĕртес ĕç мĕнле пынине вĕсен пĕлсе, тĕплĕн тата оперативно çутатса тăмалла. Çавăнпа пĕрлех радио тăрăх районри хыпарсене парас ĕçе анлăн организацилемелле, ку тĕлĕшпе районри радиоузелсемпе тата телефонсемпе тулли усă курмалла.

Агитаторсен колхозниксемпе калаçнă чухне отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен, пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен, нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа памалла, колхозниксене тăшмана кураймасăр пурăнма вĕрентмелле, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантармалла.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче татăклă çапăçусем çывхарса килеççĕ. Урса кайнă тăшман çĕнĕрен наступлени тума, пирĕн çĕршыв çинелле кĕрсе кайма хăтланать. Анчах тăшман ĕмĕчĕ [illegible]

[illegible]

Ялти коммунистсемпе комсомолецсен, агитаторсемпе пропагандистсен пысăк задачи—тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме вăйсене мобилизацилесси, фронта çĕршыв валли [illegible]

Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета, Жиро генерала, де Голль генерала

АЛЖИР

Франци нациллĕ праçникĕн кунĕнче Сире тата Сирĕн урлă Франци халăхне Совет Союзĕн правительстви халăхĕсенчен тата хамран ырă сунса салам яратăп.

Совет Союзĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Франци халăхне çирĕпленсе пыракан пĕрлĕхне саламлать. Совет халăхĕ çакна шанса тăрать: гитлерла Германие [illegible] çĕнтерсе куйĕ, ирĕкле те демократилле, никама пăхăнман Франция ирĕке тухса çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрас кун инçе мар ĕнтĕ.

И. СТАЛИН.

Пирĕн авиаци Орел чугунçул узелĕ çине бомбăсем пăрахни

[illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 14-мĕшĕнче БЕЛГОРОД енче пирĕн войскăсем тăшманăн тапăнса килекен танкĕсемпе пехотине хирĕç малалла çапăçнă.

ОРЕЛПА КУРСК енче иртнĕ кун тăшман атакăсем туман.

Пирĕн войскăсем Белгород енче, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче, нимĕçсен 100 ытла танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 47 самолетне персе ӳкернĕ.

Тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, июлĕн 13-мĕшĕнче Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăнне 13 самолет мар, 158 самолет ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Белгород енче тăшман пехотăпа танксен пысăк вăйĕсемпе темиçе хутчен те атака туса пăхнă, анчах пур çĕрте те ăна пирĕн войскăсем вăйлăн хирĕç тăрса кĕпсе илнĕ, çапла тăшман ăнăçу тăвайман. Уйрăм участоксенче совет войскисем тăшмана хирĕç пырса çапса, ăна халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕсе кăларнă. Халăх пурăнакан çав пунктсемшĕн пынă çапăçура нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 2.000 çити салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Пĕр высота районĕнче пĕр танковăй часть нимĕçсен 35 танкне, вăл шутра «тигр» йышши 7 танкне, хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 5 орудине пĕтерсе тăкнă тата 600 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Белгород енче çапăçакан Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене йывăр çухатусем тӳстереççĕ. Гварди лейтенанчĕ Бугаев командир пулса ертсе пыракан бронебойщиксен подразделенийĕ çĕрле тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Нимĕçсен танкĕсемпе пехоти атака тума тытăнсан, пирĕн боецсем сасартăк тылран пеме пуçланă. Бронебойщиксем тăшманăн 12 танкне, 10 автомашинине çунтарса янă тата 200 çити гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен атаки арканса кайнă. Орудин командирĕпе наводчикĕ пĕр тăван Ерохинсем тăшманăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ, 2 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Снайпер Григорий Максимов икĕ кун хушшинче 52 гитлеровеца вĕлернĕ. Çав çапăçура Казановский снайпер 23 нимĕçе, Земсков снайпер—17 нимĕçе, Поповпа Юшков снайперсем—6-шар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чернигов облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрядĕнчи разведчиксен ушкăнĕ хутора пырса кĕнĕ те гитлеровецсен ротипе çапăçма тытăннă. Çавăн пек перкелешнине кӳршĕри ялта вырнаçса тăракан мадьярсем асăрханă. Хутор çине партизансен пысăк вăйĕсем тапăнса пыраççĕ пулĕ тесе шутласа, гарнизон начальникĕ вĕсене хирĕç 300 çити çынран тăракан отряд хатĕрлесе тăратнă. Мадьярсем хутор çине пăшалсемпе пулеметсенчен тата минометсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Çав вăхăтра партизан-разведчиксем ялтан систермесĕр тухса кайнă. Кун çинчен нимĕн те шухăшламан мадьярсем нимĕçсем йышăнса тăракан хутор çине хĕсĕех пынă. Нимĕçсен ротипе мирĕç 4—3 сехет хушши çапăçнă хыççăн мадьярсем хутора вăркăнса кĕнĕ те, амантнă 70 нимĕçе тата вилнĕ 35 нимĕçе курсан тин, вĕсене партизансем çавтерн чиен улталанине ăнланса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 52-мĕш истребительнăй эскадринчен июлĕн 9-мĕшĕнче тыткăна илнĕ летчик обер-лейтенант Тергард Люти çапла каласа панă: «52-мĕш эскадра Германи çарĕн главнăй командовани резервĕнче тăрать. Июлĕн 4-мĕшĕнче эскадрăна Белгород районне куçарчĕç. Пирĕн трупăн Бельгород енче кĕрешекен 68 самолетĕнчен вырăс летчикĕсемпе зенитчикĕсем июлĕн 5-мĕшĕнче—16 самолет, июлĕн 6-мĕшĕнче—11 самолет, июлĕн 7-мĕшĕнче—3 самолет персе антарчĕç. Кунсăр пуçне, 15 машинăна сиенлесе нумайлăха стройран кăларнă. Юлашки вăхăтра нимĕçсен авиаци промышленноçĕ пысăк йывăрлăхсем тӳсет. Квалификациллĕ рабочисем, чĕртаварсем, уйрăмах тĕслĕ металсем çитмеççĕ. Самолетсем çавтери нумайăн пĕтнине промышленность ĕнтĕ витсе тыма пултараймасть. Вĕçевçĕсен вĕрентсе хатĕрленĕ кадрĕсем те çитмеççĕ. Нимĕç авиацийĕ чечекленнĕ тапхăр тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ, унăн вăйĕсемпе ресурсĕсем кунран-кун чакса пыраççĕ».

* * *

Италире нимĕç офицерĕсемпе чиновникĕсене, Италин нумай хулисене пырса тулнăскерсене, тапăнасси час-часах пула пуçланă. Веронăра Германие ăсатма хатĕрленĕ грузсене тултарса пыракан поезда железнодорожниксем тытса чарнă та нимĕçсен 2 чиновникне хĕнесе пĕтернĕ. Римра нимĕç посольстви çурчĕ умĕнче Германие хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ. Чивитавеккья районĕнче Итали салтакĕсем нимĕçсен 3 офицерне вĕлернĕ.

* * *

Пирĕн авиаци Финн заливĕнче нимĕç транспортне путарнă, Баренц тинĕсĕнче тăшманăн транспорчĕпе танкерне путарнă.

* * *

Чугуевран сурçĕртерехре совет артиллерисчĕсем тăшманăн хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 2 тупине, пирĕн позицисем çине персе тăраканскерсене, пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан ушкăн тăшман вырнаçса тăнă çĕре сăрхăнса кĕнĕ те 30 гитлеровеца вĕлернĕ, унтан тыткăна илсе, хамăрăн чаçа ăнăçлăнах таврăннă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем, артиллерипе минометсенчен персе, тăшманăн 12 дзотне, 17 блиндажне ишĕлтернĕ, минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Кĕçĕн лейтенант Попов командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ тăшмана тытăçса 10 белофинна вĕлернĕ.

* * *

Карели фронтĕнче капитан Богатырев командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем хӳтĕлесе тăракан кĕпере тăшман тытса илме хăтланнă. Гитлеровецсем 3 хутчен атакăна ыткăннă, анчах нимĕнле ăнăçу та тăвайман.

ВЕСНИНЫ, КРАПИВНА, ШВАНОВА, ЯГОДНАЯ, ЕЛЕНСК, ТРОСНО, КЛЕН ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ОРЕЛ хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн вăйлăн тĕреклетнĕ оборона линине 30 километр хушши выртакан фронтра татса тухнă та, вăл вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, 20—25 километр малалла кайнă. Çак енче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 60 пункта ытла, вăл шутра ВЯЖИ, ОРЛОВКА, КАЗАРЬ, МЕЛЫНЬ, ВЫСОКОЕ, ПОБЕДНОЕ, СЕТУХА, БЕРЕЗОВЕЦ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Пирĕн войскăсем наступлени тунă вăхăтра нимĕçсен 56, 262, 293-мĕш пехотнăй дивизийĕсене, 5-мĕшпе 18-мĕш танковăй дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен 112, 208, 211-мĕш пехотнăй дивизийĕсене, 25-мĕшпе 36-мĕш мото-дивизийĕсене пысăк поражени тӳстернĕ.

Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче 2.000 ытла салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех, туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—40, тĕрлĕ калибрлă орудисем—210, минометсем — 187, пулеметсем — 99, тĕрлĕ складсем — 26.

109 танк, 294 самолет, тĕрлĕ калибрлă 47 оруди ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ.

Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче противник, вилнисене кăна шутласан та, 12.000 салтакпа офицер ытла çухатнă.

Пирĕн войскăсем малалла наступлени тăваççĕ.

Июлĕн 15-мĕшĕнче БЕЛГОРОД енче пирĕн войскăсем противник танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире янă.

ОРЕЛПА КУРСК енче пирĕн войскăсем оборонăна куçнă противника хирĕç атакăсем тунă.

☆ ☆ ☆

Белгород енче пирĕн войскăсем противникăн хаяр атакисене сире-сире янă. Çĕнĕ танксемпе мотопехотăна илсе пырса, нимĕçсем пирĕн войскăсем хирĕç тăнине сирсе яма хăтланнă. Çав атакăсем вăхăтĕнче гитлеровецсем салтаксемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Пĕр соединени танкисчĕсем тăшманăн 51 танкне, боеприпассемпе горючи тиенĕ 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 2.000 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Лейтенант Калиниченко командир пулса тăракан рота нимĕç пехотин икĕ батальонĕн атакине сирсе янă, çав батальонсем танксемпе пĕрле тапăнса килнĕ пулнă. Тăшман танкĕсем подраздлени вырнаçнă вырăна кĕрсе кайсан та пĕр боец та хăйĕн вырăнне пăрахса кайман. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе, красноармеецсем нимĕç пехотине танксенчен татса илнĕ те 300 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Противникăн танкĕсем мина хурнă вырăна пырса тăрăннă, унтах вĕсем пирĕн артиллери пучĕ айне пулнă. Тăшманăн çав çапăçура пулнă 17 танкĕнчен нимĕçсен 14 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра Замуло лейтенантăн танковăй экипажĕ противникăн 5 танкне çунтарса янă. Петрушков лейтенантăн танковăй экипажĕ нимĕçсен «тигр» йышши 2 йывăр танкне, бронетранспортерне тата 30 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орелпа Курск енче противник, июлĕн 5-мĕшĕнче наступлени куçса, темиçе кун хушши совет оборонине татса тухма хăтланчĕ. Салтаксем, танксем, самолетсем тĕлĕшĕнче нимĕçсем питех те пысăк çухатусем тӳсрĕç, анчах ăнăçу тăваймарĕç. Юрă тăкса хавшанă тăшманăн пирĕн ĕçĕсене тăрăх, оборонăна куçмалла пулчĕ. Паян пирĕн войскăсем, артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн, противника ăнăçлăн атакăланă. Пĕр чаçăн танкисчĕсем халăх пурăнакан пĕр пункшăн çапăçнă чухне тăшманăн пехотин батальонне аркатса тăкнă, нимĕçсен 9 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем гитлеровецсене вăйлăн тĕреклетнĕ позицисенчен хĕсе кăларнă, нимĕçсен 400 çити салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

Пирĕн авиаци противник войскисем çине бомбăсем пăрахнă. Автомашинăсем, орудисем нумай пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи икĕ эшелона ватса çĕмĕрнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвелтухăçнерехре пирĕн разведка тăвакан группăсем активлăн çапăçнă. Кузнецов лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсем противник вырнаçса тăнă вырăна кĕрсе кайнă та 2 блиндажа, унта пулнă гитлеровецсемпе пĕрлех, çĕмĕрсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçура противникăн виçĕ самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери подразделенийĕсем нимĕç артиллерин 10 батарейин вутне пусарнă, 12 дзот, 8 блиндаж тата 4 наблюдательнăй пункта аркатнă, противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

Пирĕн авиаци противникăн 2 тральщикне тата хуралти катерне сиенленĕ.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ уйăх хушши çапăçса противникăн 8 çар эшелонне тӳнтерсе янă. 6 паровоз, войскăсемпе техника тиенĕ 74 вагон тата горючи тултарнă 24 цистерна пĕтерсе тăкнă. Ленин ячĕпе хисепленекен отрядăн партизанĕсем июнĕн 26-мĕшĕнче шоссе çулĕ çине мина лартса тухнă. Партизансем лартнă минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ларса пыракан 3 автомашина сирпĕнсе кайнă. 40 гитлеровец вилнĕ. Тепĕр районра совет патриочĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе штаб офицерĕсем ларса пыракан çăмăл машинăпа грузовике сирпĕнтерсе янă.

ИЮЛĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Çак кунсенче ОРЕЛ хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвелтухăçнерехре вырнаçса тăракан пирĕн войскăсем, чылай контратакăсем тунă хыççăн, нимĕç фашисчĕсен войскисене хирĕç наступлени тума тытăннă. Наступлени икĕ енчен пуçланнă: ОРЕЛ хулинчен çурçĕртерехри районран кăнтăралла тата ОРЕЛ хулинчен хĕвелтухăçнерехри районран хĕвеланăçнелле пынă.

ОРЕЛ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн войскăсем противникăн вăйлăн тĕреклетнĕ оборона линине 40 километр хушши выртакан фронтра татса тухнă та виçĕ кун хушши вăйлăн çапăçса 45 километр малалла кайнă. Противникăн хирĕç тăмалли узелĕсемпе тĕреклетнĕ пункчĕсене нумай аркатса тăкнă. Çак енче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 50 пункта ытла, вăл шутра УЛЬЯНОВО ятлă район центрне тата СТАРИЦА, СОРОКИНО, МОЙЛОВО, ДУДОРОВСКИЙ,

Фронтри хаçатсенчен

ПАТТĂР РОТА

ФЕЛЬДФЕБЕЛЬ: Ку виçĕ мăшăр аттăпа тархасшăн шире парăр, пĕтĕм рота çаруран çӳрет.

ИНТЕНДАНТ: Виçĕ мăшăр аттăпа пур пĕрех пĕтĕм ротăна тумлантараймастăр.

ФЕЛЬДФЕБЕЛЬ: Пĕтĕм ротăна тумлантарма мар, пĕр атти ытлашши те юлать-ха: Гансăн хăрах урине ĕнер мина татса кайрĕ.

(«В бой за Родину»).

«ПАСАЛНĂ» САЛТАК

— Фрицкене мĕншĕн суда панă?

— Дисциплинăна пăснăшăн. Виçĕ кун хушшинче вăл пĕр хресчене çеç çапса вĕлернĕ, никама та çаратман тата урамра тĕл пулнă ачана та вĕлермесĕрех ирттерсе янă.

(«Сталинец»).

ЧИ ШАНЧĂКЛИСЕМ

ОБЕР-ЛЕЙТЕНАНТ: Герр полковник, ку мĕне пĕлтерет? Эпĕ шанчăклă пополнени ыйтнăччĕ, мана ухсахсемпе суккăрсен ротине пачĕç.

ПОЛКОВНИК: Вĕсем чи шанчăклисем пулаççĕ те ĕнтĕ: кирек мĕн пулсан та вĕсем каялла пăрахса тараймаççĕ.

(«Сын родины»).

Фашистла тамăк

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, июлĕн 13-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Партизансем пулăшнипе Белоруссирен фронт линийĕ урлă каçса Витебск облаçĕнчи Дрисса районне кĕрекен Каркалец ялĕн çынни Анна Ануфриевна Крепеня хăйĕн виçĕ ачипе тата 73 çулхи амăшĕпе Прасковья Федоровнăпа килнĕ. Крупеня çемьи гитлерла мерзавецсем совет çыннисене çаратни тата вĕлерсе пĕтерни çинчен хăрушла çĕнĕ фактсем каласа панă.

Каркалец ялне нимĕçсем пĕлтĕрхи август уйăхĕнче пырса кĕнĕ. Фашистсем, 105 лавпа яла ирхине ирех çĕмĕрсе кĕрсе, урамсене пулеметсемпе тупă вырнаçтарса лартнă, унтан гитлерла автоматчиксем çуртсем тăрăх саланса çаратма тытăннă. Тырпула, лаша кӳлмелли хатĕрсене, сĕтел-пукансене, тумтирсене—пурне те пуçтарса кайнă. Колхозниксем вăрмана тарнă, унта çĕр пӳртсенче пурăнма тытăннă. Гитлеровецсем вĕсене ухтарса тупса тытнă пеккине пурне те вĕлерсе пынă.

Тепĕр виçĕ кунтан фашистсем кӳршĕри Оплично ялне çĕмĕрсе кĕнĕ. Вĕсем талкишĕпех çаратма тытăннă. Анчах каялла кайнă чухне вĕсене партизансем тĕл пулнă. 50 гитлеровецран иккĕшĕ кăна тарса хăтăлнă, ыттисене пурне те пĕтерсе тăкнă.

Каçхине фашистсем орудисемпе минометсем илсе килнĕ те вăрман çине çурçĕрчченех персе тăнă. Унтан сывăхри ялсем çине кулленхи-кун пеме пуçланă.

Çак çулхи февраль уйăхĕнче фашистсем ялсене йĕркеренех çунтарма тытăннă. Каркалец, Шабалы, Курзупы, Бузово ялĕсене çунтарса янă. Бузово ялĕнче 500 çынна яхăн чĕрĕллех çунтарса янă. Яла гитлерла автоматчиксем çавăрса илнĕ те колхозниксене çунакан çуртсем ăшне вăйпах тĕрте-тĕрте кĕртнĕ, кĕменнисене пере-пере пăрахнă.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Уйрăм участоксене суйласа илсе ыраш вырма тухрĕç

КАЛИНИНО, июлĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян Шĕнерти «Первомайски» колхозăн 4 бригади те иртерех пулнă уйрăм участоксене суйласа илсе ыраш вырма тухрĕç. Тырпулсене вырса пухма колхоз тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ, жнейкăсем пурте хатĕр, колхозра ача яслипе столовăй уçнă.

Агитаторсем бригадăсенче боевой листоксем кăларчĕç. Хаçат-журналсене уя илсе тухрĕç.

Çавăн пекех паян уйрăм участоксем çинче ыраш вырма Услапари «Броневик», Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхозсем те тухрĕç, вĕсем 2—3-шер гектар вырчĕç.

В. ЗАЙЦЕВ, Г. МАТВЕЕВ.

* * *

ЕЛЧĔК, июлĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те ыраш пулса çитсе пырать. Тепĕр 2—3 кунтан чылай колхозсенче ыраша вырăнăн-вырăнăн суйласа вырмалла пулать. Тырă пулса çитнине асăрхаса тăни кирлĕ.

Акă паян районри Ворошилов, Тельман ячĕсемпе тăракан тата «2-ая Пятилетка» колхозсем уйрăм участоксем çинче суйласа ыраш вырма пуçларĕç.

* * *

ШĂХАСАН, июлĕн 15-мĕшĕ. (Хамăр корр.). «Красный Октябрь» колхоз паян ыраша выăнăн-выăнăн суйаса вырма тытăнчĕ. Пур бригадăсем те ыраш вырма организованно тухрĕç, паян пĕтĕмпе 8 гектар вырчĕç. Колхозăн ырашĕ кăçал никăçанхи пек мар лайăх, кашни гектартан вăтам шутпа 14 центнер тырă пухса илме ĕмĕтленеççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУМ ÇУМЛАС, УТĂ ÇУЛАС ТАТА СИЛОС ХЫВАС ĔÇСЕМ ИЮЛĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Тĕштырăсем çумланă (процентпа)	Техникăллă культурăсем çумланă (процентпа)	Утă çулнă (процентпа)	Силос хывнă (процентпа)
Улатăр	100,0	100,0	65,0	51,3
Элĕк	58,4	82,0	50,1	75,4
Вăрнар	95,8	100,0	93,2	68,7
Йĕпреç	46,0	57,9	101,1	18,9
Ишлей	49,1	46,5	86,9	75,8
Калинино	50,0	97,5	96,5	52,0
Канаш	100,0	60,2	100,0	44,4
Куславкка	44,0	100,0	63,2	30,7
Комсомольски	60,1	49,1	84,5	51,9
Красноармейски	47,3	34,4	87,6	56,0
Хĕрлĕ Чутай	49,4	100,0	75,4	24,0
Кувакино	44,5	72,9	100,0	2,1
Сĕнтĕрвăрри	36,0	97,2	70,5	100,6
Октябрьски	43,5	26,2	77,6	56,5
Первомайски	52,4	57,4	90,1	54,4
Пăрачкав	52,5	78,6	82,2	34,0
Советски	98,7	100,0	97,8	53,2
Сĕнтĕр	100,0	97,6	91,3	66,0
Вăрмар	42,1	80,8	81,1	37,1
Çĕрпӳ	94,6	100,0	95,3	178,0
Шупашкар	74,0	100,0	100,0	87,8
Чкаловски	64,4	44,1	100,0	80,1
Шăмăршă	91,1	46,0	69,2	71,6
Шăхасан	100,0	73,3	105,1	88,3
Çĕмĕрле	99,3	93,6	89,9	91,2
Етĕрне	46,9	99,9	74,0	62,5
Елчĕк	99,1	98,1	100,0	62,4
Тăвай	100,0	100,0	100,0	68,9
Шупашкар хули	100,0	—	69,0	20,0
ЧАССР тăрăх	70,3	79,0	82,9	62,8
Июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	64,7	73,9	57,9	49,5

КОМБАЙНСЕМПЕ МОЛОТИЛКĂСЕНЕ ЮСАС ĔÇ КĂÇАЛХИ ИЮЛĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сенче МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Капитальнăй тата такущи ремонт (процентпа)
Вăрнар	141,6
Элĕк	133,3
Йĕпреç	133,3
Вăрмар	129,4
Шупашкар	128,5
Шăхасан	120,0
Елчĕк	115,0
Красноармейски	111,1
Куславкка	100
Ишлей	100,
Канаш	90 9
Сĕнтĕр	88'8
Шăмăршă	80'8
Хĕрлĕ Чутай	80'0
Первомайски	80'0
Çĕмĕрле	71'4
Комсомольски	66'6
Сĕнтĕрвăрри	66'6
Çĕрпӳ	60'0
Тăвай	57,1
Чкаловски	50,0
Пăрачкав	44,4
Улатăр	38,8
Кувакино	35,5
Етĕрне	35,5
ЧАССР тăрăх	84,2
Июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	62,1

3 пин купа утă пухрĕç

КАЛИНИНО. Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозпа социализмлă ăмăртăва тухса хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем утă çулнă çĕрте кăçал ытхăçанхи пек мар хастарлăн ĕçлереç. Кĕске вăхăт хушшинче вĕсем 112 гектар çинчен паха утă çулса пухрĕç. 3 пин купа утта пĕр çăмăр кăтартмасăр калансене хывса лартрĕç.

Утă çулнă çĕрте пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме колхозра ачасен яслине площадкине уçни нумай пулăшрĕ. Колхозниксем хăйсен пĕтĕм вăйне ĕçе пачĕç. Нумайĕшĕсем ĕç нормине куллен 150 процента çити тултарса пычĕç.

Халĕ колхоз тырпулсене вырма тухма тĕплĕн хатĕрленет.

В. ЗАЙЦЕВ.

„Красное Сормово“ колхоз уборка умĕн

СĔНТĔР. Кăçпа виççĕ илейми тырă хумханса ларать. Сарă сăн çапнă ыраш тулли пуçахĕсем пĕр-пĕрин çине таяннă.

— Пуян тырпул кĕтетпĕр кăçал. Нумай вăй хучĕç колхозниксемпе колхозницăсем, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, —тет «Красное Сормово» колхоз председателĕ Майков юлташ.

Вăл колхозниксемпе колхозницăсем çуракине ăнăçлăн туса ирттернĕ хыççăн тырпулсене лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн, халĕ уборкăна тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн çине тăрса ĕçлени çинчен каласа парать.

— Анчах хирти тырă вăл амбарти мар-ха. Ăна ăнăçлăн пухса кĕртес тесен, икĕ хут, виçĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлес пулать,—тет председатель.

Ăнса пулакан тырпула пухса кĕме «Красное Сормово» колхоз хатĕрленсе çитрĕ ĕнтĕ. Жнейкăсем ĕçе хатĕр, комбайнсем ... силкăна та тырă вырмалла туса лартнă. Кĕреплеллĕ çавасем 20 ытла тунă.

Тырă вырма тухсан виççĕмĕш кунĕнчех колхоз авăн çапма тытăнать. Витнĕ итемсене çĕнĕ тырра кĕртме халех хатĕрлесе çитерессишĕн тăрăшаççĕ. Виçĕ витнĕ итем, вĕсенче пуринче те молотилкăсене вырнаçтарса лартнă, веялкăсемпе сортировкăсем те ĕçе хатĕр. Тырă хума 19 амбар тасатса хатĕрленĕ, тырă турттарма 120 михĕ пур.

Утă çулма тухнă май колхозра ача ясли тата площадки ĕçлеме пуçларĕ. Вăл тырăсене пухса кĕртиччене ĕçлемелле. Унта куллен 50 ача пулать. Вĕсен амăшĕсем ĕç вăхăтĕнче ачасене пăхас пирки кансĕрленмеççĕ.

Халĕ «Красное Сормово» колхоз утă çулса пуçтарчĕ, тырă вырма тухиччен ытти вак-тĕвек ĕçсенчен пĕтĕмпех пушанма тăрăшать.

А. СОЛОВЬЕВ.

Силос хывмалли плана тултарчĕç

ЭЛĔК, июлĕн 15-мĕшĕ. **(Хамăр корр.)**. Иртнĕ вырсарникун районри комсомолецсемпе çамрăксем выльăх-чĕрлĕх валли силос хатĕрлес енĕпе воскресник туса ирттерчĕç. Воскресника пурĕ 4046 çын хутшăнчĕ, вĕсем пĕр талăк хушшинче 946 тонна силос хыврĕç. Уйрăмах «Доброволец», «Красное Сормово» колхозсенчи çамрăксем пысăк хастарлăх кăтартрĕç.

Элĕк районĕ 1943 çулта силос хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртрĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли силос 4823 тонна хывнă.

Анчах силос хывас плана районри пур колхозсем те мар пурнăçланă. Чăваш Сурăм, Ярапункино, Мăн Тупташ ялсовечĕсенчи колхозсенче халь силос хывма пачах пуçăнман.

Х. ЛИСИН.

Пуян тырпула ăнăçлăн вырса пухассишĕн

Кăçал пирĕн колхозăн 1665 гектар çинчен тĕштырăсем пухса кĕртмелле. Лайăх ĕçлесе, çулсерен удобрени хывса çемçетнĕ колхоз çĕрĕ пуян тырпул парать. Кăçал эпир пĕтĕм тырпула машинăсемпе, чи шултăра та таса вăрлăхпа акрăмăр, ака ĕçĕсене агротехникăн чи лайăх срокĕсенче туса ирттертĕмĕр. Акă халĕ колхозăн тыррисем тинĕс пек хумханса лараççĕ.

Колхоз тырă вырма тухма хатĕрленет. Ĕç планĕ тунă. Ăна колхозниксен пухăвĕнче тĕплĕн сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Ĕçсем мĕнле пулса пырасси кашни колхозникпа колхозницăшăн паллă. Çав пухурах колхозниксем, бригадăсемпе звенотсем хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Кĕрхи тырăсене 6 талăк хушшинче, çурхи тырăсене 10 талăк хушшинче пĕр тăккаламасăр вырса пухма йышăнчĕç. Тырă вырма тухсан виççĕмĕш кунĕнчех авăн çапма пуçласа, малтанхи тырра государствăна парас терĕç пирĕн колхозниксем.

Нумаях пулмасть ятарласа тунă комисси районри представительсемпе пĕрле колхоз тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине пăхса тухрĕ. Уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе колхоз чылай ĕçсене туса ирттернĕччĕ. Анчах çапах комисси çитменлĕхсем татах та тупрĕ. Тĕрĕслӳ çапла вара питĕ вăхăтлă та усăллă пулчĕ.

Халĕ ĕнтĕ тырă вырма пирĕн 11 жнейка, 654 çурла, 150 кĕреплеллĕ çава хатĕр. Вĕсене пурне те юсанă, туптанă, тĕрĕсленĕ. Государствăна тырă пама 40 лапран транспорт бригади турăмăр. Эпир итемсене тасатса дезинфекцилемелех лăпланса лармастпăр. Авăн çапма ăнăçлăн пуçлас тесен, çакна тума кирлĕ япаласемпе машинăсем халех пурте итем çинче пулмалла. Çапла бригадăсем, çĕнĕ тырра çапма хатĕрленсе, итемсем çине молотилкăсене вырнаçтарса лартаççĕ, веялкăсем, сортировкăсем, тарасасем пурте хăйсен вырăнĕнче пулаççĕ.

Кашни колхозник фронтри лару-тăрăва тăтăшах пĕлсе тăрасшăн, хаçат-журналсене кая юлмасăр вуласа пырасшăн, хăйĕн звени, бригади лайăх ĕçлет пулсан, колхозри ытти звенсемпе бригадăсенче ĕç мĕнле пынине пĕлесшĕн.

Эпир çаксене кашни колхозникех пĕлтерсе тăма тăрăшатпăр. Агитациллĕ-ăнлантарулă ĕçе уборка вăхăтĕнче лайăх йĕркелесе пыма эпир хатĕр. Кашни бригадăра—агитатор, звенора—беседчик-вулавçă пур. Вĕсем колхозниксемпе пĕрле пулаççĕ, агитациллĕ-ăнлантарулă ĕçе куллен туса пыраççĕ. Çак вăхăтрах хăйсем те ĕçлеççĕ, тухăçлăн ĕçлеме ыттисене хавхалантараççĕ.

Пирĕн Ленин ячĕпе тăракан колхоз Елчĕк районĕнче кайри вырăнта мар. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре те пирĕн колхозниксем кайри вырăнта пулмĕç. Колхоз хăй çине илнĕ обязательствăсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек пурнăçлĕ,- нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çапса аркатма вăл Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва пур енĕпе те пулăшĕ.

В. ПЕТРЯНКИН,
Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Пăрачкав районĕ çулйĕр ĕçĕнче юлса пырать

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Б. Ф. Кукушкин юлташ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 7-мĕшĕ тĕлне çулйĕр ĕçĕн заданине районĕре те пĕр колхоз çеç пурнăçланă. «КИМ» колхозсăр пуçне, ытти колхозсем задание çуррине те пурнăçламан. Уйрăмăнах «Ударник», «Большевик», Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсем çак ĕçре питĕ юлса пыраççĕ. «Ударник» колхозăн (председателĕ Липатов) çулйĕр ĕçĕнче лашапа 6 çын ĕçлес вырăнне 2 çын кăна ĕçлет, Максим Горький ячĕпе тăракан колхозран çуран 6 çын, лашапа 5 çын ĕçлес вырăнне çуран пĕр çын та ĕçлемест, лашапа та икĕ çын çеç ĕçлет.

Кукушкин юлташран ыйтрăмăр: мĕншĕн ĕç çакнашкал начар пулса пырать?—терĕмĕр. Вăл çак ыйту çине тытăнарах тăрса çапла ответлерĕ:

— Ку ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех ялсовет тата колхоз председателĕсем çак ĕç çине çителĕклĕн çавăрăнса пăхманнинчен килет. Пирĕн енчен пур мера та йышăннă,—терĕ.

Пăрачкав ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çулйĕр ĕçĕн заданине вăхăтра пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăннă-ши? Çакă вара пĕрре те паллă мар.

Паянхи куна район çулйĕрсене юсамалли плана 40 процента яхăн çеç пурнăçланă. Паллах ĕнтĕ, райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ çак ответлă ĕçе оперативно ертсе пыман.

Ф. МАЛЫШКИН.

Çулйĕр бригади аван ĕçлет

Первомайски ялĕнчи «Ильич» колхозăн план тăрăх çулйĕр ĕçĕнче 350 кубометр çĕр чавмалла, 200 кубометр чул кăларса турттармалла пулнă.

Колхоз çав задание илсенех кунта ĕçлеме колхозниксенчен ятарласа бригада организациленĕ. Бригадир пулма ĕçчен хĕрарăма Н. Никитина юлташа палăртнă.

Унăн бригади çулйĕр ĕçĕнче 350 кубометр çĕр чавас вырăнне 470 кубометр чавса, плана ытлашшипех тултарчĕ. Халĕ ку бригадăри колхозниксем чул кăлараççĕ. Паянхи куна 102 кубометр кăларнă.

И. МАЛГАЙ.

Çĕрпӳ районĕ.

Пушар дружини аван ĕçлет

ЕТĔРНЕ. Чурапай ялсоветĕнчи «Правда» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсен вут-кăварпа кĕрешекен ирĕклĕ дружини яланах сыхă тăрать. Дружина хăйĕн хуçалăхне йĕркеллĕ те юсавлă тытать. Кашни ĕç хатĕрĕ хăйĕн вырăнĕнче. Урапасемпе насоссене, пичкесене вырнаçтарса лартнă. Насоссене кашни кунах тасатса тăраççĕ.

Дружина членĕсем таврари ялсене те вут-кăвартан сыхлаççĕ, вышка çинче кунĕн-çĕрĕн хурал тăрассине организациленĕ.

Дружина иртнĕ кунсенче колхоз тата колхозниксем харпăрхăй килне сыхламалли мероприятисене епле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тухрĕ.

Колхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисенче, складсем патĕнче шыв лартарчĕ, çуртсенчи кăмакасен мăрьисене пăхса тухса, шăтăк-çурăксене юсаттарчĕ, вут-кăвар мĕн тухсан, мĕнле ĕç хатĕрĕпе тухмаллине кăтартса пачĕ.

Дружина начальникĕ Н. Родионов юлташ колхозниксем хушшинче час-часах вут кăвартан сыхланмалли мероприятисем çинчен каласусем ирттерет.

А. К.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен Сицили утравĕ çине аннă войскисен вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Канада войскисем Сицили утравĕ çинче Поццалло, Рагуза, Флоридиа тата Августа хулисене йышăннă.

Юлашки операцисем вăхăтĕнче итальянецсен çыранра 206-мĕш дивизи командирне, американецсем 7-мĕш д'Авет генерала тытса илнĕ.

Сицили утравĕ çине союзниксен 15-мĕш армейски групни кĕрешет. Ку группăна акăлчансен 8-мĕш армийĕ, американецсен 7-мĕш армийĕ тата Канада войскисем кĕреççĕ.

Акăлчансен тата канадецсен утрав чаçĕсем 40 миля чухлĕ фронт тăршшĕпе (Поццаллопа пуçласа Сиракуза таран) утрав çине шалалла кĕрсе пыраççĕ. Американецсен йышăннă территори талккишĕпе, çыран хĕррипе, Джеларан пуçласа Ликатăна çитиччен шалалла кĕрсе пырать. Американецсем те çав фронт талккишĕпех утрав çинелле шалалла кĕрсе пыраççĕ.

Юлашки хыпарсем тăрăх, акăлчансен войскисем Сицили çыранĕсем çине Катания çывăхĕнче анса юлнă.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Сицили утравĕ çинче ку таранччен 304 тăватăл миля йышăнса илнĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Союзниксен Сицили утравĕ çине анă войскисем итальянецсен икĕ дивизийĕсене çапăçăссĕ. Пĕри «Ливорно» ятлă 4-мĕш дивизи. Ку дивизие Джелапа çурçĕр-хĕвелзанăçĕнчере тĕп пулнă. Тепри—54-мĕш дивизи. Ку дивизие Сиракузăран çурçĕр-хĕвелзанăçĕнчере тĕп пулнă. Ку таранччен 7 пин çынна тытса илнĕ, вĕсен пурте тенĕ пекех итальянецсем.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, енер каçхине тăшман войскисем танкĕсемпе Сицилире американецсен линине татса çырса тухнă. Американецсем çĕнĕрен йĕркеленнĕ те тăшмана вăйлăн çапса, прорыва пĕтерсе ларнă. Союзниксен войскисем тăшман танкĕсене чылаях пĕрсе çĕмĕрнĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс фронтĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Эйзенхаур генерал тата унăн заместителĕ генерал Александер Сицилие пырса çитнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем Италири тата Сицилири аэродромсене тапăннă.

Тăшманăн Тирренски тинĕсри суднисене атакăланă чух икĕ суту-илӳ пароходне шыва путарнă, иккĕшне çунтарса янă. Çапăçусенче тăшманăн 28 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Июлĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле самолетсен пысăк соединенийĕ Туринри тĕрлĕ объектсене атакăланă.

Акăлчансен боевой разведка тăвакан истребителĕсем Франците, Голландире тата Бельгире чылай объектсене тапăннă

Англи авиацийĕ Аахена тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем нимĕçсен Аахен хулине вăйлăн тапăннă. 20 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Аахен Германие Францие тата Голландие çыхăнтарса тăракан чугунçулсен паллă центрĕ пулса тăрать. Çавăн пекех Аахен промышленность енĕпе те паллă центр, çĕркăмрăк парса тăрас тĕлĕшпе те пысăк район пулса тăрать. Хулара хăйĕнче тата унăн тулашĕнче 30—40 фабрикăпа завод пур. Вĕсем пир-авăр фабрикисемпе завочĕсем, çавăн пекех тата кантăк. машинăсем тăвакан заводсем те пур.

КĔСКЕН

▲ Югославия патриочĕсем Баня-Лука провинцинче Павелич лартнă губернатора вĕлернĕ.

▲ Загреб хулинче 50 заложнике асаплантарса вĕлернĕ. Загреб патĕнчи чугунçул линине сирпĕнтерсе янă. Югославия патриочĕсене кăтартнă вăхăтра тупайман пирки нимĕç салтакĕсем çĕрле 22 сехетпе 5 сехет хушшинче хула урамне тухакан кашни Югославия çыннинех персе пересççĕ.

Бельги патриочĕсен кĕрешĕвĕ

ЖЕНЕВА, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Бельгире партизансен кĕрешĕвĕ вăйăланса пырать. Отрядсенче нумайĕшĕнче партизансен йышĕ те, хĕçпăшал та çителĕклех. Çавăн пек отрядсенчи партизансем халĕ час-часах лайăх хĕçпăшалланнă эсэсовецсен чаçĕсемпе те вăрçма кĕрсе каяççĕ, çав çапăçусенче гитлеровецсене йывăр çухатусем кӳреççĕ. Льеж хулинчи нимĕç комендантчĕн управленийĕ çакна ирĕксĕрех йышăннă: çав хула районĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ эсэсовецсен пысăк отрядне хирĕç тăрса темиçе сехет хушши парăнмасăр çапăçнă. Ун чухне эсэсовецсен отрячĕ партизансен отрячĕн базине вырнаçса тăракан тавралăха «шăртласа» тухасшăн пулнă. Партизансем хастарлăн çапăçнине тӳсеймесĕр гитлеровецсем çапăçу хирне артиллери илсе пынă. Анчах гитлеровецсене артиллери пулăшайман. Бельги патриочĕсем унтан ăнăçлăн тухса гитлеровецсен куçĕ умĕнчех çухалнă.

США-н тинĕс-çар вăйĕсем ӳссе пыни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс министерстви çапла пĕлтернĕ: çак 1943 çулăн малтанхи 6 уйăхĕ хушшинче США-ра çĕнĕрен 6 пин ытла çар судни туса кăларнă, вăл шутран çурри ытла десант антармалли баржăсем. Çав çĕнĕ суднăсен пĕтĕм тоннажĕнчен çурри ытла çар карапĕсем çине ӳкет, вĕсен шутĕнче—линкорсем, авианосецсем, эсминецсем тата подводнăй лодкăсем.

Пĕлтĕрхи пĕрремĕш çурçулпа танлаштарсан, кăçалхи пĕррмĕш çурçулта пĕлтĕрхинчен 3 хут çурă ытла çар карапĕ строя кĕнĕ. Çак çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă кашни виçĕ çар карапĕ пуçне çак ултă уйăх хушшинче флота тата тепĕр карап çĕнĕрен хутшăннă. Çав çĕнĕ суднăсене тума 2 миллиард та 500 миллион доллар укçа тухнă, суднăсен тоннажĕ пĕр миллион тоннăна çитет.

Савăнпа пĕрлех тинĕс-çар флотне çак çурçул хушшинче 9 пин самолет ытла çĕнĕрен хутшăннă.

Чăваш юррисем хавхалантарчĕç

Эпĕ вăрçă пуçлансанах фронта килтĕм. Çав вăхăтранпа чăваш юррине илтмен. Нумаях пулмасть радио «Атăл тăрăхĕнчи халăхсен юррисене паратпăр», терĕ. Савăннипе репродуктор патне пырса лартăм. Чăваш юрри илтĕнсе каясса кĕтетĕп. Малтан марийецсен, унтан мăкшăсен юррисене юрласа пачĕç. Часах чăваш юрри те илтĕнсе кайрĕ. Малтан «Маня» юрра юрласа пачĕç, ун хыççăн «Кай-кай Ивана»: Чăваш юррине чылай вăхăт илтменскер, савăннипе радиопа пĕрле юрласа ятăм. Ман умма темле пысăк телей çитсе тăнă пекех туйăнчĕ. Çак илемлĕхе пĕтерсе тăкма тапăннă тăшмана пĕтĕм чунтан тарăхса çитрĕм. Çав илемлĕхшĕн мĕнпур вăйран кĕрешме тупа турăм.

Красноармеец М. ИВАНОВ.

Фронтшăн

Вăрман енчен вăшлатса вĕрекен çил кăнтăрлапа чарăнчĕ. Çанталăк ытла та шăрăх. Сар хĕвел хăйĕн вĕри пайăркисене çĕр çине пĕр хĕрхенмесĕр сапалать. Пăчă. Тарпа йĕпеннĕ кĕпе çанçурăм çумне çыпçăнса ларать.

Иркӳлĕм клевер çулса пĕтернĕ хыççăн тăваттăмĕш бригадăри колхозниксем пухăва пухăнчĕç.

Çуркунне акнă тулă, сĕлĕ тата ытти тырăсем бригадăн тап-таса. Симĕс пустав сарса тухнă пекех туйăнать хирте. Вĕсем тырпула икĕ-виçĕ хут çумласа тасатнă. Ĕнер суха ачисем каçа юлса ĕçлесе çĕртме туса пĕтерчĕç. Уй-хирте ыттăн тырă виççĕ çитĕнет. Колхозниксем ыран тесен—ыранах тырă вырма тухмашкăн хатĕр. Машинăсăр пуçне, кăçалхи çул вĕсем тырпула çурлапа та, кĕреплеллĕ çавасемпе те вырса-çулса пуçтарма хатĕрленеççĕ. Бригадăра 27 çава хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Колхозĕпе çĕрсе яхăн çава пулать. Çичĕ кун вырнă хыççăн кĕлте турттарса çапма тата малтанхи тырра фронт валли ăсатма уйрăм бригадăсем тунă.

Тăваттăмĕш бригадăри колхозниксем пур ĕçе те пĕр харăс тухса, ĕçе тирпейлĕн те кал-каллăн, вăхăтра тума юрататççĕ.

Бригадăн паянхи пухăвĕнче пĕр ыйту. Пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕнĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăр Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ аслă вăрçа тухни икĕ çул çитни çинчен коммунист-агитатор Тверсков каласа парать. Икĕ çул хушшинчи улшăнусем çинчен—Хĕрлĕ Çар вăйĕ ӳссе пыни çинчен, фашистсен лагерĕнче кризис пуçланни çинчен вăл тĕплĕн ăнлантарать.

— Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре, тăван çĕршыври ытти халăхсен ачисемпе пĕрле, чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем те хăйсен пысăк паттăрлăхĕпе хăюлăхне кăтартаççĕ. Фронта ăсатнă чухне эпир вĕсене Гитлер йыттисене хăвăртрах вĕлерсе пĕтерме, тăван киле çĕнтерӳпе таврăнма пехиллерĕмĕр. Пирĕн сăмаха, çĕршыв сăмахне, аслă атте Сталин сăмахне фронтовиксем паттăррăн пурнăçлаççĕ. Вĕсем ылханлă тăшмана хирĕç арăслансем пек тăрса çапăçаççĕ. Пирĕн те, тылри патриотсен, фронтовиксемпе тан пуласшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Симĕс йывăçсен сулхăнĕнче итлесе ларакан колхозниксем пĕрин хыççăн тепри тăрса бригадăри хăшпĕр çитменлĕхсене палăртаççĕ, вĕсене çийĕнчех пĕтерме, фронтшăн, Хĕрлĕ Çаршăн татах та хастарлăнтарах ĕçлеме пулса, кăçалхи вăйлă тырпула тăккаламасăр, тирпейлĕн пухса кĕртме сăмах пăраççĕ. Вĕсем сăмахпа каланине ĕçре кăтартаççĕ.

Тепĕр кунне хĕвел тухиччен Шĕмшеш колхозникĕсем Сăрă шывĕ тăрăх тилĕк çӳлĕш ӳснĕ улăх утине çулма тухрĕç. Хĕрипраç çине аякран пăхсан, улăха хуракăш кĕтĕвĕ анать, тейĕн. Пурте шурă тумпа çависене хулпуççи çине хунă та сывлăм ӳксе суталнаă çереме йĕрлесе анаççĕ.

Çынсем ретĕн-ретĕн тăрса уйрăм звеносене уйăрăлчĕç. Çивĕч çавасем сĕткенленнĕ курăка чашлаттарса касни çеç илтĕнсе пырать.

Акă кунтах çамрăксен пĕр звени ĕçлет. Серафим Ельмов, Анастасия Челейкина, Софья Мытина кулленхи ĕç нормине 200—250 процент тултараççĕ. Çамрăксенчен нумайĕшĕ кăçалхи çул пĕрремĕш хут утă çулма тухнă-ха.

— Иван мучи, манăн çава (касми пулчĕ,—илтĕнет çинçе сасă.

Иван Федорович Артемьев колхозри чи ватă старик. 75 çулта вăл. Шурă сухаллă, пуçĕ çинче шурă çӳç пĕрчисем те сайралнă. Çапах та вăл çамрăксенчен юласшăн мар. Иван мучи, тесе юратса чĕнеççĕ ăна колхозниксем, вăрçăччен Иван мучин утă çулма икĕ яш-ывăлĕ тухнă. Халĕ вĕсем фронтра—тăшманпа çапăçаççĕ. Иван Федорович та çапăçать, —вăл колхозра ĕçлесе фронтовиксене пулăшать.

Паян ирех вăл çавине йăтса ĕçе çитнĕ. Ĕçе чĕнсех те каймаççĕ ăна бригадирсем. Анчах мучин килте ларма кăмăл çук. Вăл çамрăксене çулма вĕрентет. Çависене юсаса парать е çамрăксемпе пĕр рете тăрса, вĕсемпе ăмăртса çулма тытăнать. Канса ларнă вăхăтра та çамрăксенчен юлмасть: шӳт тума юрататать вăл.

Çулса пăрахнă утта типĕтекен сар хĕвел вăрман хыçне пытанчĕ. Каçхи çил лăпкăн вĕрме пуçларĕ. Лапсăрккa йывăçсем айне тунă палаткăсем умĕнче пĕчĕк ачасем чупкаласа амăшĕсене кĕтме тытăнчĕç. Çавăнтах вĕсене çитереççĕ, выляттараççĕ. Вĕсене уйрăм çын пăхать.

Кăтра хурăн айне çакнă хуран айĕнчен тĕтĕм йăсăрланми пулчĕ. Таврана пиçнĕ какай шăрши сарăлчĕ. Колхозниксем каçхи апат тума: какай яшки, çуллă пăтă çиме тата пылпа чей ĕçме пуçларĕç.

Сасартăк ушкăнтан пĕри: «Иркка килет, çĕнĕ хаçатсем, çырусем, çырусем кĕтĕр!»—тесе сасă пачĕ.

Вунтăватă çулхи Ирина Григорьева ялтан утă çулакансем патне улта çухрăма кашни кун çĕнĕ хаçатсем, çырусем илсе пырать. Паян çырусем нумай. Екатерина Романова та упăшкин кăвак конвертлă çырăвне вуласа тухнă хыççăн чĕри çумне чăмăртарĕ. Савăннипе куççулĕ тухрĕ унăн. Фронтран, вăйлă çапăçу хыççăн çырнă вăл çырăва. Комсомолец Ельмов колхозниксене çĕнĕ хаçатсем вуласа парать. Виçĕ-тăватă хĕр темшĕн пĕр тĕле пухăнса тăраççĕ. Çыру вулаççĕ иккен вĕсем. Фронтран Романов Иван савнă хĕрĕ патне çыру янă. Сухалнах тетчĕç Ивана ялти колхозниксем. Çулталăк ытла çыру яман вăл киле. Авă паянхи çырăвĕнче: «Сывă пурăнатни, Настя! Çырса пĕлтерме васкатăп—хам сывă та тĕрĕс пурăнатăп. Ан çиллен, Настя, юлашки вăхăтра киле те çыру яма май килмерĕ... утă çулма тухатăр пуль эсир, колхозра тăрăшса ĕçлĕр. Эпир киле таврăнас вăхăт нумай юлмасть»,—тесе çырать.

Романов Ивана ялти çынсем кăна мар, таврари ялсем те лайăх пĕлеççĕ. Мирлĕ вăхăтра çĕр çине кăç шăплăхĕ анса вырнаçсан купăс сасси янăраса каятчĕ. Кăпа Иван ыллятчĕ. Çамрăксем ташлатчĕç, юратнă юррисене юрлатчĕç. Хĕрсем савнă каччисемпе калаçатчĕç. Çĕр иртни те сисĕнмесчĕ. Ирпе ирех çамрăксем çĕнĕ вăйпа ĕçе тухатчĕç. Халĕ ак вăрçă. Романов фронтра—çак мирлĕ пурнăçа ултавлăн пăснă тăшмансемпе паттăррăн çапăçать.

Тата икĕ кунтан комсомолецсемпе çамрăксем Иван Романов патне утă çулса пĕтерни çинчен тата колхозри ытти ĕçсем те ăнăçлăн пулса пыни çинчен çыру çырса ячĕç. Çавăнтах колхозниксем фронта пур енчен те пулăшма тăрăшни çинчен, фронтовиксем киле çĕнтерӳпе таврăнассине чунтан-вартан кĕтсе тăни çинчен ăшă сăмахсемпе каласа хăварчĕç.

В. ЛЮБИМОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасă илемлĕ

АКТРИСА

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сценарийĕ—Эрдманпа Вольпинăн.

Постановки-Сталинла премисен лауреачĕн А. Траубергăн.

Режиссерĕсем—М. Шапирăпа Н. Кошеверова.

Операторĕ—А. Москвин.

Тĕп рольсене вылякансем: республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ Г. Сергеева тата Сталинла премисен лауреачĕ Б. Бабочкин.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Пур автомашинăсен хуçалăхĕсене те пĕлсе тăма

Июль уйăхĕн 6-мĕш числинчен пуçласа Калинин урамĕнчи водокачка патĕнче автомашинăсене çуса тасатакан вырăн кашни кунах ирхине 8 сехетрен пуçласа каçхине 9 сехетчен ĕçлет.

Центрти Главзаготскотăн Чăваш республикинчи конторине яланхи ĕçе главнăй бухгалтер тата машинистка васкавлăн кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 21. Телефон 3—16 е 6—12.

Леспродторгăн Шупашкарти отделенине çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: старши бухгалтер, бухгалтер-ревизор, бухгалтер, статистик.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 36, Леспродторг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.

НТ 196